Вырăнти самоуправлени: ыйту – хурав

# Çĕнĕ саккун вăя кĕнĕ май

***131-ФЗ № «Раççей Федерацийĕнче вырăнти самоуправление йĕркелессин пĕтĕмĕшле принципĕсем çинчен» Федераллă саккуна 2003 çулхи октябрĕн 6-мĕшĕнче йышăннăччĕ. 2009 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса вăл пĕтĕмĕшле туллин юридици вăйне кĕчĕ. Анчах та çакă вăл вырăнти самоуправлени çинчен калакан законодательство аталанăвĕн пĕр тапхăрĕ кăна. Паллă ĕнтĕ, общество тата патшалăх малалла аталанса пынă май вырăнти самоуправленин право йĕркелĕвне те çĕнетсе пыма тивĕ.***

***Çакă та пĕлтерĕшлĕ самант. Тĕрĕссипе вырăнти самоуправлени шăпине йышăнакан çĕнĕ, питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ саккунсем те татса параймĕç. Вырăнта пурăнакан çынсем хăйсен муниципаллă пĕрлешĕвĕн пурнăçне активлă хутшăнни, самоуправлени органĕсемпе должноçри çынсем çине тăрса тата тĕллевлĕ ĕçлесе пыни кирлĕ. Раççей Федерацийĕн Президенчĕ 2008 çулхи апрелĕн 28-мĕшĕнче йышăннă 607 № «Хула округĕсенчи тата муниципаллă районсенчи вырăнти самоуправлени органĕсен ĕçĕ-хĕлĕн эффективлăхне хакласси çинчен» Указ та çавăн пирки калать.***

***Çавна май хамăр хаçат страницисенче «Вырăнти самоуправлени: ыйту – хурав» ятпа ятарлă рубрика уçма шутларăмăр. Тĕллевĕмĕр – вулакансене саккун положенийĕсемпе тĕплĕнрех паллаштарасси. Материалсене ыйтупа хурав мелĕпе йĕркелесе пырăпăр. Ыйтусем çине вара район администрацийĕн йĕркелӳпе кадрсен, право енĕпе тивĕçтерессин тата вырăнти самоуправлени органĕсемпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ Лилия Юрьевна ТАРАСОВА хуравлама, асăннă рубрикăна ертсе пыма килĕшрĕ.***

**ЫЙТУ: – Вырăнти пĕлтерĕшлĕ ыйтусене халĕ вырăнти самоуправлени органĕсем татса пама тивĕç. Мĕнле ыйтусем кĕреççĕ ку ушкăна?**

**ХУРАВ:** – Вырăнти самоуправление йĕркелени шăпах ĕнтĕ вырăнти пĕлтерĕшлĕ ыйтусене вырăнтах татса пама май пуррипе çыхăннă. Кусем вĕсем вырăнта пурăнакан çынсем хăйсемех е вырăнти самоуправлени органĕсем татса паракан çынсен кулленхи пурнăçĕпе тата ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă ыйтусем. Вĕсене татса парасси вырăнти самоуправлени компетенцийĕ шутланать. Çапла вара çакă халăх влаçĕн системинче унăн автономине тивĕçтерет.

Законодательствăра тăватă тĕрлĕ муниципаллă пĕрлешĕве уйăрнă май, 131-ФЗ Федераллă саккун вырăнти пĕлтерĕшлĕ ыйтусене те ял тăрăхĕсенне, муниципаллă районсенне, хула округĕсенне уйрăм палăртать. Федераллă пĕлтерĕшлĕ хуласен вырăнти пĕлтерĕшлĕ ыйтăвĕсене вара РФ субъекчĕсен саккунĕсемпе кăна палăртма пултараççĕ.

Муниципаллă районсен тытăмне яланах ял тăрăхĕсем кĕнине шута илсе, вырăнти самоуправленин территори органĕн çакăн пек «икĕ типлă» моделĕ вырăнти самоуправленин ыйтăвĕсене те уйăрать. Вĕсем хушшинче ял тăрăхĕсен вырăнти пĕлтерĕшлĕ пĕтĕмĕшле ыйтăвĕсем уйрăлса тăраççĕ. Кусем вĕсем муниципаллă районăн вырăнти самоуправлени органĕсем тата (е) çынсем хăйсем тĕллĕн татса паракан вырăнти пĕлтерĕшлĕ хăш-пĕр ыйтусем. Саккунăн 36-мĕш статйи муниципаллă йĕркеленĕвĕн пуçлăхне харпăр хăйĕн полномочийĕсемпе тивĕçтерет.

Вырăнти пĕлтерĕшлĕ ыйтусен переченьне асăннă Федераллă саккуна улшăнусемпе хушăмсем кĕртнĕ хыççăн кăна улăштарма май пур. Вырăнти пĕлтерĕшлĕ ыйтусене татса пама каякан укçатенкĕ тăкакĕсене вырăнти бюджетран саплаштарма тивĕç (федераллă бюджетран тата РФ субъекчĕсен бюджечĕсенчен уйăрса паракан субвенцисене шутламасан).

Вырăнти пĕлтерĕшлĕ ыйтусене татса парас ĕçе ял тăрăхĕсен вырăнти самоуправлени органĕсем тата хула округĕсен вырăнти самоуправлени органĕсем муниципаллă йĕркеленӳсен уставĕсемпе килĕшӳллĕн ирĕклĕ майпа граждансене хутшăнтарасси пирки йышăну тума пултараççĕ. Ку ĕçсем шутне ятарлă професси хатĕрленĕвĕ кирлĕ мар ĕçсем кăна кĕреççĕ. Вырăнти социаллă пĕлтерĕшлĕ ĕçсем пĕр вĕçĕм 4 сехетрен ытла тăсăлмалла мар.

Вырăнти самоуправлени органĕсем хăйсен полномочийĕсене хăйсемех пурнăçлаççĕ. Пĕр муниципаллă йĕркеленĕвĕн вырăнти самоуправлени органĕ е должноçри çынни тепĕр муниципаллă йĕркеленĕвĕн вырăнти самоуправлени органне е должноçри çыннине пăхăнни пулмалла мар.

Раççей Федерацийĕн Президенчĕ 2008 çулхи апрелĕн 28-мĕшĕнче йышăннă 607 № «Хула округĕсенчи тата муниципаллă районсенчи вырăнти самоуправлени органĕсен ĕçĕ-хĕлĕн эффективлăхне хакласси çинчен» Указ пирки кĕскен çавна палăртса хăвармалла. Самоуправлени органĕсен ĕçнехĕлне хаклама кăтартусен ятарлă переченьне туса хатĕрленĕ. Пĕтĕмпе 30 кăтартăва шута илеççĕ. Чи ăнăçлă ĕçлесе пыракан хула округĕсемпе муниципаллă районсем валли ĕç тăвакан влаç органĕсене грантсем те уйăрма сĕннĕ.

Ял çыннисене пĕлме

# Газ хакланчĕ

Раççей Федерацийĕн Правительствин тата Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн йышăнăвĕсемпе, Тарифсем енĕпе ĕçлекен федераллă службăн хушăвĕпе килĕшӳллĕн тата «Газпром» уçă акционер обществи хатĕрлесе паракан газăн оптовăй хакĕ чакнă май, 2008 çулхи декабрĕн 29-мĕшĕнче ЧР Министрсен Кабинечĕ 412-мĕш номерлĕ йышăну кăларнă.

Сăмах кунта çынсене, пурăнмалли çурт-йĕрпе эксплуатаци организацийĕсене, нумай хваттерлĕ çуртсене тытса тăракан организацисене, пурăнмалли çурт-йĕрпе строительство кооперативĕсене, çурт-йĕр хуçисен юлташлăхĕсене, çынсене йăлара усă курма парса тăракан çут çанталăк газĕн çĕнĕ хакĕсене çирĕплетесси пирки пырать. 2009 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса асăннă тĕллевсемпе уйăракан газăн 1000 кубла метрăн хакĕ 2125,76 тенкĕ пулĕ, 2009 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса – 2234,32 тенкĕ, 2009 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса – 2349,96 тенкĕ, 2009 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса – 2459,70 тенкĕ.

Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин законодательствисемпе килĕшӳллĕн граждансен уйрăм категорийĕсене пама пăхнă социаллă хӳтлĕх мелĕсене сыхласа хăварма палăртнă.

Çут çанталăк газне ытти тĕллевпе уйăрнă чухне вĕсен виçи 2009 çулта çапла пулĕ:

1. Мунчасене хутса ăшăтма уйăрнă чухне (шутлав приборĕсем пур пулсан) – январĕн 1-мĕшĕнчен 2125,76 тенкĕ, апрелĕн 1-мĕшĕнчен 2234,32 тенкĕ, июлĕн 1-мĕшĕнчен 2349,96 тенкĕ, октябрĕн 1-мĕшĕнчен 2459,70 тенкĕ.
2. Гаражсене, мастерскойсене, теплицăсене хутса ăшăтма уйăрнă чухне (шутлав приборĕсем пур пулсан) – январĕн 1-мĕшĕнчен 2656,41 тенкĕ, апрелĕн 1-мĕшĕнчен 2791,89 тенкĕ, июлĕн 1-мĕшĕнчен 2937,07 тенкĕ, октябрĕн 1-мĕшĕнчен 3075,11 тенкĕ.
3. Предпринимательство ĕçĕ-хĕлĕ валли уйăракан (вăл шутра уйрăм çынсен çурчĕсенче е хваттерĕсенче арендăна илнĕ пулсан та) пӳлĕмсене хутса ăшăтма уйăрнă чухне (шутлав приборĕсем пур пулсан) – январĕн 1-мĕшĕнчен 2778,01 тенкĕ, апрелĕн 1-мĕшĕнчен 29364,36 тенкĕ, июлĕн 1-мĕшĕнчен 3103,73 тенкĕ, октябрĕн 1-мĕшĕнчен 3265,12 тенкĕ.

Шутлав приборĕсем çук чухне вара çынсем валли уйăракан газшăн тӳлемелли виçене газăн хакне тата унпа усă курнин нормативĕсене кура палăртĕç.

Ĕçре ырă ятлисем

# Вăтăр çул электрикре

Александр Степанович Любимов вăтăр çул ĕнтĕ Муркашри подстанцире вăй хурать. Çак вăхăтра пысăк опыт пухнă, ăста ĕçченсенчен пĕри шутланать вăл. Хăйĕн ĕçне чунтан юратать.

А.С. Любимов 1948 çулта Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхне кĕрекен Вомпăкасси ялĕнче çуралнă. Шкулта вĕреннĕ чухнех вăл электричествăпа çыхăннă ĕçсемпе кăсăкланнă. Шкул пĕтерсен вара хăйĕн шухăшне пурнăçа кĕртес шутпа Шупашкара çул тытнă, кунта электротехникумра вĕренме тытăннă.

1978 çулхи март уйăхĕнче вăл Çурçĕр электричество сечĕсен Муркашри подстанцийĕнче ĕçлеме пуçăннă. Малтанхи вăхăтра электрик пулса тăрăшнă. Кайран, çирĕм çул ĕнтĕ, диспетчер пулса тăрăшать.



Ĕçленĕ тапхăрта районăн хăш кĕтесĕнче кăна пулса курман-ши! Унăн ĕçĕ ытларах электричество линийĕсем çинче пулакан аварисемпе çыхăннă. Авари вара вăл ялан тенĕ пекех çумăрлă-юрлă, çил-тăманлă çанталăкра пулать. Электриксен вара çил-тăман чарăнасса кĕтсе лармалла мар çав. Çийĕнчех çула тухас пулать, кăлтăка тӳрлетмелле. Çĕрле çула тухни те сахал мар пулнă. Çынсене, пĕрлешӳллĕ хуçалăхсене, предприятисене электричествăсăр лартман.

Вăтăр çул хушшинче вăл сахал мар çамрăка çак профессие алла илме пулăшнă.

Мăшăрĕпе иккĕшĕ вĕсем виçĕ ача пăхса ӳстерсе пурнăç çулĕ çине кăларнă. Икĕ хĕрĕнчен асли хирург пулса ĕçлет, çынсен сывлăхне сиплет. Кĕçĕнни вара – Людмила – Чăваш патшалăх университечĕн экономика факультетне вĕренсе пĕтернĕ. Алексей ывăлĕ вăрман техникумĕнчен вĕренсе тухнă, сварщик пулса ĕçлет. Ачисем те ашшĕне хывнă: хăйсене шанса панă ĕçе ответлăха туйса пурнăçлаççĕ. Ашшĕ вĕсемшĕн яланах тĕслĕх пулса тăрать.

Хастар ĕçчен çак кунсенче хăйĕн юбилейне паллă турĕ, 60 çул тултарса тивĕçлĕ канăва тухрĕ. Çав ятпа ăна мĕн пур тăванĕсем ырлăх-сывлăх сунса малашне çакăн пек хастар пулма сунчĕç.

**В. НИКОЛАЕВ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: А.С. Любимов.**

Тав тăватăп

# Лайăх çынсем пур!

Кăткăс саманара пурăнатпăр та ют çынсене шанма та çук пек туйăнать. Апла пулин те пирĕн хушăра та лайăх çынсем пур-ха.

Пĕррехинче Муркаша кайма тухрăм. «Газель» автобус çинче мана япăх пулса кайрĕ. Вилсе каятăп-и-ха тесе шухăшласа пыратăп. Муркаша çитсен çывăхри райпо аптекине кĕтĕм.

Кунта сутă тăвакан хĕрарăм мана курсан, ĕçне пăрахрĕ те пукан лартса пачĕ.

- Эсир хăвăра начар туятăр-им?– ыйтрĕ вăл пăлханса.

Манăнне юн пусăмне виçрĕ. Телефонпа шăнкăравласа врачпа канашларĕ. Эмел пачĕ. Манăн юн пусăмĕ хăпарса кайнă иккен. Юн таппи чакса ларнă.

Тепрер сехетрен хама лайăххах туйма пуçларăм. Çак тĕлĕнмелле хĕрарăма тав туса киле кайрăм. Ăна Валентина Серафимовна Мудукова тесе чĕнеççĕ иккен. Темĕн пысăкăш тав сăмахĕ калатăп сире. Турă пулăштăр!

**О. ТЯМИНА.**

Катькас ялĕ.

Вулакан пултарулăхĕ

***Мăшăрăм Иосиф Иванович Пушкин 70 çул тултарнă май***

# Саламлатăп эп сана

Паянхи кун эп сана
Пĕр-ик сăмах каласшăн.
Паян санăн юбилей –
70 çулхи юбилей.
70 çул вăл нумай мар,
Нумай та мар, сахал мар.
Ĕмĕр сакки сарлака,
Ахаль мар вăл çав сăмах.
Эпир санпа утатпăр
45 çул пĕрле.
Эпир утнă çул çинче
Пулчĕç тикĕс вырăнсем,
Тикĕс вырăнпа пĕрлех
Пулчĕç шĕвĕр тумхахсем.
Çав тумхаха якатма
Çума-çумăн утрăмăр,
Ума лартнă тĕллеве
Пурнăçланă вăхăтра.

Юлашкинчен эп калам,
Юбиляра халаллам:
Паян кун эс пит савăн,
Юррине те эс юрла,
Ташшине те эс ташла,
Купăсне те эс кала.
Паянхи кун эп сана
Çирĕп сывлăх сунатăп,
Çирĕп сывлăхпа пĕрле
Вăрăм ĕмĕр сĕнетĕп.
Маллахи çулсенче
Хальхи пекех пул маттур.
Ачасен пурнăçĕпе,
Мăнуксен кун-çулĕпе
Пурăн эсĕ савăнса,
Хăв сывлăхна упраса.

**Р. ПУШКИНА.**

Официально

## В Приложениях к райгазете от 17 января 2009 года печатаются следующие постановления главы администрации Моргаушского района:

| № постановления | Дата постановления | Наименование |
|---|---|---|
| 1 квартал 2008 г. № 3 | 10.01.2008 | Об утверждении Положения о порядке расходования средств резервного фонда администрации Моргаушского района |
| № 23 | 21.01.2008 | О досрочном повышении заработной платы работникам бюджетной сферы в Моргаушском районе |
| № 54 | 25.01.2008 | Об установлении квалификационных требований |
| № 121 | 28.02.2008 | Об утверждении Правил предоставления средств из районного бюджета Моргаушского района |
| № 157 | 12.03.2008 | О внесении изменения в постановление главы администрации Моргаушского района от 31.03.2006 г. № 100 «а» «Об утверждении районной программы «Поддержка молодых семей Моргаушского района в решении жилищной проблемы на 2006-2010 г.г.» |
| № 197 | 28.03.2008 | О внесении дополнений в постановление главы администрации Моргаушского района от 27.12.2007 № 610 «Об утверждении Правил предоставления средств из районного бюджета Моргаушского района» |
| № 202 | 31.03.2008 | О внесении изменений и дополнений в районную Программу «Поддержка молодых семей Моргаушского района в решении жилищной проблемы на 2006-2010 г.г.» |
| 2 квартал 2008 г № 228 | 04.04.2008 | О муниципальной целевой программе улучшения условий, охраны труда и здоровья работающих в Моргаушском районе на 2008-2010 годы |
| № 291 | 05.05.2008 | Об утверждении программы «Комплексное развитие жилищно-коммунального хозяйства Моргаушского района на 2008-2011г.г.» |
| № 292 | 05.05.2008 | Об утверждении Правил установления и использования придорожных полос автомобильных дорог общего пользования, относящихся к собственности Моргаушского района |
| № 308 | 14.05.2008 | О совершенствовании и расширении сферы применения программно-целевых методов бюджетного планирования |
| № 333 | 28.05.2008 | О порядке формирования и финансового обеспечения выполнения муниципального задания, осуществляемого за счет средств районного бюджета Моргаушского района |
| № 346 | 04.06.2008 | Об утверждении Правил предоставления средств из районного бюджета Моргаушского района на поддержку развития малого и среднего предпринимательства |
| № 364 | 10.06.2008 | О внесении дополнений в постановление главы администрации Моргаушского района от 27.12.2007 № 610 «Об утверждении Правил предоставления средств из районного бюджета Моргаушского района» |
| № 395 | 02.07.2008 | О внесении дополнений в постановление главы администрации Моргаушского района от 27.12.2007 № 610 «Об утверждении Правил предоставления средств из районного бюджета Моргаушского района» |
| № 397 | 03.07.2008 | Об установлении Перечня категорий граждан, которым предоставляются служебные жилые помещения в муниципальном специализированном жилищном фонде Моргаушского района |
| № 406 | 08.07.2008 | О внесении изменения в Положение о координационном Совете по реализации приоритетных национальных проектов на территории Моргаушского района |
| № 428 | 14.07.2008 | Об основных направлениях бюджетной политики Моргаушского района в 2009 году |
| № 434 | 21.07.2008 | Об утверждении Порядка предоставления, использования о возврата бюджетных кредитов, предоставленных бюджетам сельских поселений из районного бюджета Моргаушского района |
| № 444 | 31.07.2008 | О размере родительских взносов за содержание ребенка в дошкольных образовательных учреждениях Моргаушского района |
| № 447 | 05.08.2008 | Об утверждении Порядка предоставления и расходования субсидий из районного бюджета Моргаушского района на компенсацию части затрат сельскохозяйственных товаропроизводителей, организаций агропромышленного комплекса, независимо от организационно-правовых форм, по вовлечению в оборот необрабатываемых сельскохозяйственных земель |
| № 470 | 15.08.2008 | Об утверждении примерных форм муниципальной гарантии Моргаушского района, договора о предоставлении муниципальной гарантии Моргаушского района и перечня документов, предоставляемых в администрацию Моргаушского района юридическим лицом – получателем муниципальной гарантии Моргаушского района |
| № 472 | 20.08.2008 | Об утверждении Порядка предоставления молодым семьям социальных выплат на приобретение жилья в рамках реализации подпрограммы «Обеспечение жильем молодых семей» федеральной целевой программы «Жилище» на 2002-2010 годы в Моргаушском районе |
| № 478 | 25.08.2008 | О внесении дополнений в постановление главы администрации Моргаушского района от 27.12.2007 №610 «Об утверждении Правил предоставления средств из районного бюджета Моргаушского района» |
| № 534-А | 18.09.2008 | Об утверждении Положения о порядке формирования резерва для замещения вакантных должностей муниципальной службы в администрации Моргаушского района |
| 4 квартал 2008 г. № 550 | 03.10.2008 | О внесении дополнений в постановление главы администрации Моргаушского района от 27.12.2007 №610 «Об утверждении Правил предоставления средств из районного бюджета Моргаушского района» |
| № 618 | 31.10.2008 | О размере целевых взносов физических лиц за обучение в МОУДОД «Моргаушская детская школа искусств» |
| № 620 | 31.10.2008 | Об установлении норматива стоимости 1 квадратного метра общей площади жилья по Моргаушскому району |
| № 627 | 31.10.2008 | О введении новых систем оплаты труда работников бюджетных учреждений Моргаушского района, оплата труда которых в настоящее время осуществляется на основе Единой тарифной сетки по оплате труда работников муниципальных учреждений Моргаушского района |
| № 690 | 08.12.2008 | Об установлении тарифов на услуги водоснабжения и водоотведения, оказываемые потребителям муниципальным унитарным предприятием жилищно-коммунального хозяйства «Моргаушское» Моргаушского района |
| № 693-А | 08.12.2008 | О правилах выделения доли средств местного бюджета Могаушского района в объеме софинансирования мероприятий по улучшению жилищных условий граждан |
| № 723 | 19.12.2008 | Об утверждении Положения о субсидиях юридическим лицам (за исключением субсидий муниципальным учреждениям), индивидуальным предпринимателям, физическим лицам – производителям товаров, работ, услуг из районного бюджета Моргаушского района |
| № 724 | 19.12.2008 | Об оплате труда работников бюджетных учреждений Моргаушского района, занятых в сфере культуры |
| № 762 | 31.12.2008 | Об установлении размеров платы за технологическое присоединение к системам водоснабжения и канализации |